№ 25-85-69

Тимухха Хӗветӗрӗ

Ф. Т. Тимофеев.

# Ҫырура ҫӑрӑну паллисем лартасси

Чувашская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

Ҫӑваш Оплӑҫӗнҫи Кӗнеке Кӑларакан Уйрӑм

ШУПАШКАР ☐ 1925

Чувашоблит. № 676 Печ. 3.000 экз.

Типография Чувашиздата. 1925 г.

## Ђарăну паллисем лартасси.

Пăнђа (.), хўреллĕ пăнђа (,), йĕкĕр пăнђа (:), нумай пăнђа (...), хўреллĕ пăнђăпа пăнђа (;), ыйту паллине (?), кăшкăру паллине (!), кавыђка („—“), хăлăпа [( )] ђарăну паллисем теççĕ. Вĕсене хут çине йе пĕрпĕр йапала çине ўкернĕ пуплевсене, вулама та, ăнланма та çăмăл пултăр тесе лартаççĕ. Çапла вара ђарăну паллисем çырнă пуплевсене, сăмахсене ăнласа вулама кирлĕ.

Малалла мĕнле ђарăну паллине хăçан лартмаллине калар.

**Пăнђăпа ыйту палли, тата кăшкăру палли.** Пăнђа пуплев хыççăн лартаççĕ. Нумайĕшĕ пăнђа тĕрĕс лартма ђасах вĕренеймеççĕ. Ăна тĕрĕс лартас тесен, кашни пуплевĕн хăйĕн уйрăм инттонатси —интгонатси пĕрелĕхĕ пуррине астуса илес пулаť: инттонатси пĕррелĕхĕ пĕтмесĕр, пăнђă лартма кирлĕ мар. Инттонатси пĕтсен тин, пуплев пĕтет; çавăнпа инттонатси пĕтсен тин, пăнђă лартмалла. Тĕслĕхсем:

Пĕри йурлаť, тепри ташлаť. Курăксем симĕсленђĕç, ђеђексем усăннă пуçĕсене çĕклерĕç, йăвăçсен тасалнă шулçисем ирĕклĕн сарăлса нўрлĕ сывлăша туртса çăтма пуçлаççĕ—çакă пур те çулахи çăмăр хыççăн пулаť.

Кăшкăруллă пуплев пулсан, ун хыççăн пăнђă вырăнне кăшкăру палли лартаççĕ; ыйтуллă пуплев пулсан, ыйту палли лартаççĕ. Тĕслĕхсем: Пушар! Кил кунта! Ан шарла! Кам есĕ? Мĕн?

**Хўре пăнђă.** Хўреллĕ пăнђа нумай тĕлте лартаççĕ.

а) Пĕрлешнĕ пуплевре пĕр ыйтуллă сăмахсем хыççăн лартаççĕ: Пахђара купăстасем, хăйарсем, кишĕрсем çитĕнеççĕ. Хут шурă, кăвак, симĕс, сарă, кĕрен пулаť. Те арçури, те шуйттан, çав терийех ахăраť.

Пĕрлешнĕ пуплевре „тата“ сăмах умĕн хӳреллĕ пăнӡă лартаççĕ. Акăш, ăрак, тата çăрттан тийенĕ лава туртса кайма килĕшнĕ.

ы) Йышлă пуплевре ахаӈ пуплевсем хушшине лартаççĕ: Пĕри ĕçлет, тепри çийет. Хĕвел пăхса йаӡĕ те, пур те савăнса кайрĕç.

у) Килĕшӳллĕ çум умĕпе хыçне лартаççĕ: ăна, ухмаха, тем те тăвĕç. Вĕсенӡен пĕри, ватăраххи, ыттисемпе тан пырайман. Епĕ пĕрре, пилĕк çулта ӡухне, аттепе хулана кайрăм. Вăл нумай пĕр çĕр çула йахăн, пурăннă.

ă) Пуплев çумĕсем хыççăн, йе умĕн лартаççĕ: Тухман çын гухсан, тăман тухаĭ, тет. Çапа пĕлмен пушă хăйне çавăрнса тиввĕ, теççĕ. Ман шухăшпа, Аӈук нумай ĕçлет, ăна хĕрхенме кирлĕ. Ӡăнах та, вăл калаŋи тĕрĕс пулӡĕ. Тархашшăн, авăртса пар. Ах, темĕскер куртăм!

е) Ӡĕнӳ сăмахĕн умĕпе хыçне лартаççĕ: Аĭăр, аӡасем, вăрмана! Аĭăр вăрмана, аӡасем! Аӡасем, аĭăр вăрмана!

ӳ) Йут сăмах пĕтсен, „тет, теççĕ, тенĕ“... сăмахсем умĕн лартаççĕ: Вăл калаĭ: кăна епе туман, тет.

и) Калавăн тулли пуплевлĕ çумĕ хыççăн лартаççĕ: йе хыççăн та, умĕн те: Аӡасем вăрмана кайнă ӡух, çăмăр çунă. — Çăмăр, аӡасем вăрмана кайнă ӡух, çунă. Аӡасем вăрмана кайнă пулсан, епĕ вĕсене курман пулăттăм.— Епĕ, аӡасем вăрмана кайнă пулсан, вĕсене курман пулăттăм. Аӡасем вăрмана кайнă ӡухлĕ, есĕ çăпата та туман. Есĕ сăмахна тӳрене, аӡасем вăрмана кайнă пек, кала. Аӡасем вăрмана кайнă пирки, епĕ килтех лартăм. Аӡасем вăрмана кайиӡӡен, уӡӡитлĕ кăласра лараĭӡĕ. Аӡасем вăрмана каймассерен пирĕн лашасем ывăнса килет-ӡĕç.

ĕ) Калавăн кĕскелнĕ пуплевĕ çумĕнӡе икĕ сăмах, йе ытларах пулсан, хӳре пăнӡă лартаççĕ; пĕрре пулсан, лартмаççĕ:

Вăрмана кайнă ӡух, аӡасем шыва кĕнĕ.—Аӡасем шыва, вăрмана кайнă ӡух, кĕнĕ. Вăрмана кайман пулсан, аӡасем çырла татман пулĕӡӡĕç.— Аӡасем, вăрмана кайман пулсан, çырла татман пулĕӡӡĕç. Аӡасем, кашкăр уланă пек, уланă. Çамрăк хĕр, çуркунехи ӡеӡек пек, илемлĕ. Вăл, мĕн каланине ăнланмасăр, пăлкаса тăраĭ. Ăна кура, упи те хырăмне çийе пуçланă. Хамăра асап курмашкăн турă çамка çине çырнă пулĕ. Сан усал çăкăрна çимешкĕн, епир выçă аптăрасах çитмен-ха.

Кун пек ӡух лартаççӗ:

Иван, тенкел çине ларса, çырать. Пӳртрен тухсан, шăна пуçларăм. Ахаҍ тăриӡӡен, кӗрӗкне те пулин йăвала. Аӡасем вăрмантан, çырла татса, хăнана кайнă.

Кун пек ӡух лартмаççӗ:

Иван тăрса çырать. Тухсанах шăна пуçларăм. Епир тăраниӡӡенех çирӗмӗр. Аӡасем вăрмантан васкаса таврăннă. Пурăниӡӡен вилни авантарах пулӗ. Ӗçленӗ çем ӗçлес килет.

**Хушша калани 1-мӗшӗ**: Н. И. Ашмарин, краматтӗк принтсипне йышăнса, калавăн пӗр сăмахлă пуплевлӗ çумӗсене те хӳреллӗ пăнӡă лартса уйăрать. Тӗслӗрен, вăл хăйӗн çинтакçӗсин 2-мӗш пайӗнӡе акă мӗнле çырать. 1) Кайса, çывăр. 2) Ăна кура упи те хырăмне, тата-тата, çийе пуçларӗ, тет, те, вилсех карӗ, тет. 3) Хай Иван хӗçӗпе çӗлен пуçӗсене, пӗрре касса, татса пăрахрӗ, тет, те, турамăн-турамăн туса, пӗр пысăк ӡул айне, кайса, хӗстерӡӗ, тет.

Епир йышăннă йӗрке тăрăх, „Кайса çывăр" çырмалла; „тата-тата" умӗпе хыçне хӳреллӗ пăнӡă лартас çук. Çапла çырни пуринӡен ытла епӗр никӗсе хуракан економи принтсипӗнӡен килет: ун пек çырма вӗренме çăмăл. Ашмарин кунта краматтӗк принтсипне никӗсе хурать. Апла тусан, сăмах пӗлтерӗшӗсем паллăрах курăнса тăраççӗ, анӡах çырма йăвăр: ӡăваш çинтакçисне пит аван пӗлес пулать.

**Хушса калани 2-мӗшӗ: Ма, ме** сыпăкпа пӗтекен суппинпа унран тытăнса тăракан сăмаха хăш ӡух хӳреллӗ пăнӡăпа уйăрмалла мар: Çынсем тырă вырма кайнă. Тарçăра пурăнма хӗн. Вӗсем унпа калаçма хăраççӗ. Пире кунта ларма йурамасть.

к) Пуплевлӗ тытăнса тăрусене хӳре пăнӡăпа уйăрмаççӗ; анӡах пӗрпулупа туху вӗçлевлӗхӗнӡе пулсан, вӗсене те хăшне хӳрепăнӡăпа уйăрма пулать: Аӡасем, кашкăртан хăранипе, çырлана кайма пăрахнă. Иван, ури йӗпенесрен, калуш тăхăнса йанă. Пӗӡӡен пуçпа лартăм шухăшларăм (?), çамрăк ӗмӗр йепле иртниӡӡен.

Ӡăваш çинтакçӗсӗнӡе тавлашуллă тӗлсем нумай пулмалаха.

Анӡах хӳреллӗ пăнӡа унта кунта лартни йе лартманни ӡăваш ӡӗлхишӗн пит паха йапала мар. Çавăнпа тавлашуллă тӗлсене кашни çын, хăйӗн кăмăлӗ туртнă пек, çырма пултарать.

**Пăнђăпа хӳреллĕ пăнђă.** Пăнђă — ђи пысăк ђарăну палли; хӳреллĕ пăнђă — пĕђĕк ђарăну палли. Хăш ђухне, икĕ пуплев хушшине пăнђă лартсан, — сахал пек туйăнаҫ. Ҫавăн пек ђухне пăнђăпа хӳре пăнђă лартаҫҫĕ. Ун пек палла ђăваш ҫырăвĕнђе пуринђен ытла халăх йуррисенђе лартаҫҫĕ.

Ыраш шăркана ларнă ђух,
Ҫара алпа ан тытăр;
Хĕрсем иртсе пынă ђух,
Хайар куҫпа ан пăхăр.

Путĕр путĕр путене,
Йăви тĕлне тупмасăр,
Ҫерем ҫинђе ҫĕр каҫнă;
Ах, йыснаҫăм, йыснаҫăм,
Ашшĕ килне тупмасăр,
Ҫĕр мунђара ҫĕр каҫнă.

**Йĕкĕр пăнђă.** а) Ăна пĕр пĕр пысăк ăнлава кăтартса, хисеплесе пухăнакан сăмахсем умĕн лартаҫҫĕ: Пире пур те хур тăваҫҫĕ: ҫынсем те, йытăсем те, кашкăрсем те, ытти кайăксем те. Пахђана тĕрлĕ ҫимĕҫ лартаҫҫĕ: паранкă, купăста, хăйар, тата ыттисене те. Выђăхăн тăватă ура: малта иккĕ, хыҫалта та иккĕ.

у) Пиркене кăтартакан пуплев умĕн: Ĕнер епĕ шкула каймарăм: пуҫ ыратрĕ. Ку ҫĕлĕк хаклă тăраҫ: ăна тилĕ тирĕнђен тунă.

ы) Йут сăмах умĕн: Ашшĕ ывăлне калаҫ: аҫа вăрмана ĕҫлеме, тет. Тилĕ калаҫ: ҫук, тет, нимĕн те курман, тет.

**Нумай пăнђă.** а) Нумай пăнђă сăмах калама аптăраса тăнă ђух калаҫҫĕ: Ҫук епĕ мĕн... мĕн... епĕ ним те мар.

у) Калас сăмаха мĕн пирки те пулин каласа пĕтерейменсен: Атте, мана кранташ илсе... — Ђим ха, ан ђăрмантар мана.

**Тире.** а) Ăна тухса ӳкнĕ сăмах вырăнне йе пауса тĕлне лартаҫҫĕ: Лаша — выђăх. Ађи-пăђи — ђей ăстаккаҥ: ӳксе ҫĕмĕрĕлмĕҫин — лайăх-ђĕ. Ар-ул пынă — ăс пană; хĕр арăм пынă — елек панă, тет.

е) Иккĕн йе темиҫенĕн калаҫнă ђухнехи йут сăмахсем умĕн:

— Сывă-и, кинемей?
— Пасара кайрăм!
— Хăлхасăр-и мĕн, кинемей?

— Автан илтём!

— Сывă пул, кинемей.

— Çирĕм пус патăм!

— Кам унта? тет карţăк сасси.

— Хĕрлĕ çĕлĕк, кукамай. Сан ваţţи анне кукăţпе ерех парса йаţĕ.—Уç-ха! тет кашкăрĕ.

**Кавыţкă.** Кавыţкă ţăваш ţĕлхинţе çырмаççĕ. Вырăс ţĕлхинţе ăна йут сăмахсене уйăрма çыраççĕ: он сказал: „У меня нет хлеба“.

Ţăваш ţĕлхинţе йут сăмахсем кавыţкăсăрах аван уйрăлса тăраççĕ: вĕсен умĕнţе икĕ пăнţă йе тире, хыçĕţе хŷреллĕ пăнţă, тата „тет, тенĕ, тĕрĕ... йышши сăмах: Иван мана каларĕ: мана икĕ кунлăха хăвăн кĕнекŷне парса йар-ха, терĕ.

Халĕ кавыţка вырăссем те сахал çыраççĕ. Ţăвашла çырура ăна çырма ныçтан та килмест.

Хăш ţухне кавыţкă сăмаха уйăрса каланине кăтартма, йе хытă асăрхамаллине кăтартма лартаççĕ. Ун пек ţух ţăваш çырăвĕнţе те кавыţкă пулма пултарать: Епĕ „пуйан Карука“ вуласа тухрăм. Халер вăхăтĕнţе „ţĕрĕ шыв ан ĕçĕр“.

Хытă асăрхамаллине кăтартма, тата кавыţка вырăнне те, хăш ţухне сăмахсене алă çырулла саспаллисемпе çыраççĕ, йе айалтан патак туртаççĕ, йе шултăра саспаллисем туса çыраççĕ.

Хăлăпсем хушшине кĕрсе ларусем çыраççĕ: Епĕ пĕрре Мăнтарăнпа (Мăнтарăн—йытă йаţĕ) вăрмана кайрăм. Çапла калаçса пынă çĕртĕх (Хĕветĕр! итлесе лар), вăл мана çурăмран йара паţĕ.

Йут сăмахсене çырасси. Афтăр сăмахĕ çук пулсан, умĕн тире лартаççĕ, мăн саспаллипе пуçлаççĕ; пулсан, йут сăмах умĕн йĕкĕрпăнţă лартаççĕ, хыççăн хŷре пăнţă лартаççĕ, унтан „те“ тĕпрен пулнă сăмахсем пулаççĕ.

Йут сăмахра пĕр сăмах, йе пĕр пуплев кăна пулсан, ăна йĕкĕрпăнţă хыççăн пĕţĕк саспаллипе пуçлаççĕ. Лешсем кăна: йепле есĕ çулла ху валли апат хатĕрлеймерĕн? теççĕ. Шăрţăк калать: пушанаймарăм-çке, шав йурăсем йурларăм, тет.

Ţухăн хуçа каланă: Курмасăр, куртăм. Енер, епĕ сан патăнтан пухнă ţух, хурţăка сан ывăлу çине йарăнса анţĕ те, çаклатса кайрĕ, тет. Пуйан хуçа çиленсе каланă: Манран мăшкăласа

кулма сана намăс. Хурӳăка аӳана йăтса кайасси пулас ĕç-и вăл? тет.

Çĕнĕ йĕрке. Темиçе пуплев çырнипе пĕр шухăша каласа пĕтерсен, тепĕр йышши шухăша пуçласа йаракан пуплеве çĕнĕ йĕркерен çыраççĕ.

Уйрăмрах шухăша пĕлтерекен пуплевсене çĕнĕ йĕркерен пуçлани вăл питĕ кирлĕ: Апла тусан, çырнине вулама та, ăнласа илме те çăмăлтарах.

---

Чувашская
Книжная палата
Чувашской АССР